❑АЛЕКСЕЙ ЛЕОНТЬЕВ






# ЧĂВАШ ХАЛĂХ СĂМАХЛĂХĔ:
# ĔНЕНЎСЕМПЕ ЧАРУСЕНЕ ТĔПЧЕС ЫЙТУСЕМ

**Резюме:** Чăваш халăх сăмахлăхĕнче çанталăк сăнавĕсемпе (паллисемпе) ĕненўсене, чарусене, тĕлĕксене яланах пĕр ушкăна кĕртнĕ. Çакна вĕсене халĕччен никам та тĕплĕн тĕпчеменнипе, жанрсене чикĕлеменнипе ăнлантармалла. XIX ĕмĕр вĕçĕнче Василий Магницкий асăннă пуплерĕшсене малтанхи хут ушкăнланă. XX ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринче ĕненўсемпе чарусене Николай Никольский хатĕрленĕ программăсемпе килĕшўллĕн йышлă пуçтарнă. Вĕсем Николай Ашмаринăн «Чăваш сăмахĕсен кĕнекинче» те нумай. 2009 çулта çак каларăшсем Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ кăларакан «Чăваш халăх пултарулăхĕ» ярăмăн «Сăнавсемпе ĕненўсем. Тĕлĕксем» кĕнекинче пичетленнĕ. Вĕсене Вячеслав Ендеров ушкăнлама пуçланă, анчах ĕçе вĕçлеймен. Çак статьяра автор ĕненўсемпе чарусене чăваш фольклористикинче пĕрремĕш хут анлăн тĕпчет, хăйĕн классификацине сĕнет.

**Тĕп сăмахсем:** ĕненў, чару (табу), йăла-йĕрке, мифсем, тĕпчев историйĕ, жанрсене чикĕлесси, ушкăнлав (классификаци).

**Çuvaş Halk Edebiyatı: İnanışlar ile Tabuları Araştırma Sorunları**

**Özet:** Çuvaş halk edebiyatında doğaya ilişkin deneyimler ile inanışları, yasakları, rüyaları sürekli aynı tasnif içinde değerlendirilmişlerdir. Bu durum, bunları şimdiye dek kimsenin derinlemesine ele almaması ve türlerin sınırlarının belirlenmemesi ile açıklanabilir. XIX. yüzyıl sonunda Vasiliy Magnitskiy anılan ibareleri ilk defa sınıflandırmıştır. XX. yüzyılın ilk yarısında inançışlar ile tabulara ilişkin örnekleri Nikolay Nikolskiy'in hazırladığı programlarla uyumlu şekilde defaatle derlemiştir. Bu tip örnekler Nikolay Aşmarin'in *Çĭvaş Sĭmahĭsen Kĭnekĭ* [Çuvaş Kelimeler Kitabı] adlı eserinde de çokça yer almaktadır. 2009 yılında bu sözlü yaratmalar Çuvaş Devlet İnsani Bilimler Enstitüsü'nün çıkardığı *Çĭvaş Halĭh Pultarulĭhĭ* ["Çuvaş Halk Yaratıcılığı"] serisinin *Sĭnavsempe Ĭnenüsem. Tĭlĭksem* [Tecrübelerle İnanışlar. Rüyalar] kitabında yayımlanmıştır. Bunları Vyaçeslav Yenderov sınıflandırmaya başlamış, ancak bu işi tamamlayamamıştır. Bu makalede yazar, inanmalarla yasakları Çuvaş folklor biliminde ilk defa geniş bir şekilde incelemekte, kendi sınıflandırmasını sunmaktadır.

**Anahtar Kelimeler:** inanışlar, yasak (tabu), gelenek, mitler, araştırma tarihi, türleri sınırlandırma, sınıflandırma.

**Chuvash Folk Literature: Research Problems Regarding Beliefs and Taboos**

**Abstract:** Experiences related to nature in Chuvash folk literature is constantly evaluated in the same category with beliefs, taboos and dreams. This situation can be explained by the fact that no one has ever discussed them thoroughly and determined the boundaries between categories. At the end of the 19th century, Vasiliy Magnitskiy classified the previously mentioned expressions for the first time. In the first half of 20th century, he repeatedly collected examples regarding beliefs and taboos in accordance with the programs prepared by Nikolay Nikolskiy. Such examples are frequently found in Nikolay Aşmarin's work *Çĭvaş Sĭmahĭsen Kĭnekĭ* [The Book of Chuvash Words]. In 2009, these oral creations are published in *Sĭnavsempe Ĭnenüsem. Tĭlĭksem* [Experiences and Beliefs. Dreams], a book belonging to the *Çĭvaş Halĭh Pultarulĭhĭ* ["Chuvash Folk Creativity"] series published by Chuvash State Institute of Humanities. Vyaçeslav Yenderov began categorization of these but could not complete the task. In this article, the writer analyzes beliefs and taboos in Chuvash folklore science broadly for the first time and presents his classification.

**Keywords:** Beliefs, taboos, tradition, myths, history of research, classification of genres, classification

**Умӗн калани.** Статьяра эпир *çанталăк сăнавĕсемпе (паллисемпе) тĕлĕксене* тишкерместпĕр, урăхла каласан – вĕсене *ĕненӳсемпе чарусенчен* тĕллевлĕн уйăратпăр. Çав вăхăтрах вĕсен никĕсĕнче те ĕненӳ тăнине хирĕçлеме май çук. Çанталăк сăнавĕсенчен: *Атăл кĕркунне ир шăнсан тепĕр çул тырă начар пулать* (ЧПГĂИ ĂА I: 102: 301); *Аслă çăварни кунĕ юр çусан мăйăр пулать* (Смоленский 1894: 201). Кунта виçĕ ĕç куратпăр: сăнаса пыни, сăнанине пурнăçра тĕрĕслени, тĕрĕсленĕ хыççăн ĕненме пуçлани. Тĕлĕксенчен: *Ют çын сысни килсе кĕрсен çын чирлет теççĕ* (ЧПГĂИ ĂА I: 650); *Çăхан курсан нумай пурăнассине пĕлтерет* (ЧПГĂИ ĂА: III: 2227: 292). Кунта та виçĕ ĕç: курни, пурнăçра тĕрĕслени, ĕненме пуçлани. Ĕненӳсемпе чарусенчен: *Чӳклеме пăтти çимесен Турă çилленет те мĕнле те пулин айăп тăвать* (ЧПГĂИ ĂА I: 650); *Чашăк-тирĕк каçхине çумасăр хăварма юрамасть – шуйттан çулать теççĕ* (Федотова 2009: 250). Çак икĕ тĕслĕх вара пире пайăр ĕçе (пăтă çиес тата чашăк-тирĕк çăвас) пурнăçламасан мĕн те-тĕр пуласса чуххăммăн ĕненме ыйтать. Пĕрремĕш тĕслĕхне тĕрĕслеме пулать пек: çын кашни кунах чӳклеме пăтти çимесĕрех çул çинче такăнма е алăкран çамкипе çапăнма, урине вĕлтренпе пĕçертме, яшкапа чыхăнса кайма пултарать т. ыт. те. Иккĕмĕш тĕслĕхе епле тĕрĕслемелле? Хайхи-майхи усалĕ пуррине ĕненетĕн-и, ĕненместĕн-и – чашăк-тирĕке тытса çăвасси çеç юлать.

Ĕненменнисем виççĕмĕш ушкăна кĕрекен каларăшсене тĕшмĕшлĕх теççĕ. Çанталăк сăнавĕсемпе тĕлĕксене çаплах хаклакансем те йышлă. Анчах чăваш халăх сăмахлăхĕнче ĕненӳ никĕсре тăракан паремисен виçĕ пысăк ушкăнĕ пуррине йышăнмах тивет: *çанталăк сăнавĕсем, тĕлĕксем* тата *ĕненӳсемпе чарусем*. Паян *ĕненӳсемпе чарусем* пирки калаçăпăр.

Вĕсем пире мĕн ачаранпах, тĕрĕсрех каласан – çураличчненех хупăрласа тăраççĕ, вĕсем пирĕнтен пурăнăç тăршшĕпех хăпмаççĕ, вĕсем пур çĕрте те: пӳртре, картишре, пахчара, мунчара, урамра, çырмара, вăрманта, хăнара, тӳпере… *Алăри ачаран паллă ун хыççăн кам çураласси, ывăл е хĕр пуласси теççĕ. Алăри ачан ĕнси хыçĕнчи çӳçĕ тăсăлса тăрсан ывăл тăватăн тепĕр ачана теççĕ, ĕнси хыçĕнчи çӳçне çивĕтленĕ пек хĕреслĕ тăрсан тепĕр ачана хĕр тăватăн теççĕ* (ЧПГĂИ ĂА I: 159: 395–396). Çакă чăна тухать-и çук-и – анчах ĕненӳ пур. *Ан куçăхтăр тесе пĕчĕк ачан çамкине хăрăмпа пăнчă лартаççĕ* (Федотова 2009: 33). Ĕненетĕн-и, çук-и – çапла тăвасси

тахçанах йăлана кĕнĕ. *Апат пĕçернĕ чух хуран ӳлесен ырра мар теççĕ* (ЧПГĂИ ĂА I: 650). Чăнах çапла-и, çапла мар-и – вут сыппине айккинелле тĕртсе хуратăнах. *Апат çинĕ чух хĕр ача ура сулласа ларсан амăшĕ вилет теççĕ* (ЧПГĂИ ĂА I: 650), *арçын ача ура сулласан ашшĕ вилет теççĕ* (ЧПГĂИ ĂА I: 650). Çапла асăрхаттарса каланине ача ĕненетех, чи çывăх та юратнă çынна камăн çухатас килтĕр. Илсе кăтартнă сăмах çаврăнăшĕсенче пуринче те *теççĕ* глагол. Вăл, паллах, çынра иккĕленӳ туйăмĕ çурататех. Эппин, кунта ваттисен сăмахне – *Тет хыççăн кайсан шыва сикнĕ тет* – асра тытни яланах кирлĕ.

*Ĕненӳсенчен* питех уйрăлса тăман пуплерĕшсем те пур. *Утма пуçламан ачан кĕпине çунă чух тавăрма юрамасть* (ЧПГĂИ ĂА I: 650). Ку – *чару*. Анчах – çапла чарнине ĕненмелле-и, мĕншĕн юрамасть, тавăрса çусан мĕн пулать? Халăх сăмахлăхĕ тепĕр тĕслĕхре çак чарăвăн хуравне те упраса хăварнă: *Утма пуçламан ачан кĕпине çунă чух тавăрсан чĕлхи уçăлмасть теççĕ* (ЧПГĂИ ĂА I: 650). Иккĕмĕш тĕслĕхе *чарусен* йышĕнчех хăвармалла-и е ăна *ĕненӳ* темелле-и? Паллах, ку – *ĕненӳ*, мĕншĕн тесен хурав пур. *Кăмакана хирĕç ан карăн* (ЧПГĂИ ĂА III: 751: 167). Çак пуплерĕш карăнсассăн мĕн те пулин (паллах, аван марри) сиксе тухасран асăрхаттарать. Анчах хуравне тупаймастпăр, тĕшмĕртеетпĕр кăна. Ку енĕпе пире мифологи пулăшаять. Кăмакара *Вут турри* пурăнать, кăмака çинче вара – *Кăмака амăшĕ* (Ашмарин 1935: VII: 127), çавăн пекех ырăсем – *Хĕрт-сурт, Пирĕшти,* тата усалсем – *Вупăр, Инкек*. Кăмака таса вăй-хăватлă. Чӳк тунă хыççăн çунса пĕтмен шăмăсене, апат юлашкисене, çуртасене кăмакара çунтарса янă, çапла тусан усал вăйсенчен тасалатпăр тенĕ. Кăмака вучĕпе *Кăмака нишĕнчен* (рахитран) сипленĕ (Антипина 2018: 182–183). Çапла вара кăмака – чăваш килĕнчи чи сăваплă атрибутсенчен пĕри. Ун умĕнче карăнни ăна сумсăрлатниех пулĕччĕ. Чиркӳ умĕнче е масар çинче вил тăприне хирĕç тăрса карăнмастпăр-çке-ха. *Вут çине вĕрме, сурма юрамасть* (Федотова 2009: 61) чару та вут сăваплăхĕнчен тухса тăрать. Çак чарупа унăн уççи темиçе ĕненӳре сыхланса юлнă: *Вут çине суракан*ăн *янаххине шатра тухать теççĕ* (ЧПГĂИ ĂА I: 650), е *Вут çине сурсан тути çине кĕсен тухать теççĕ* (Тимофеев 1972: 280). Тепĕр тĕслĕх: *Кĕнекене хĕвел аннă вăхăтра вуламалла мар* (Федотова 2009: 97). Чăваш кĕнекине ĕне çинĕ тетпĕр пулсан – ку *чару*, тен, сумсăр та синкерлĕ çак ĕç (эпĕ ăна «ĕне çинĕ» мар, «ĕннĕ-çуннă» тесшĕн) пулса иртиччене вăйра тăнă, е ăна ислам тĕнĕпе ăнлантармалла. Мăсăльмансен хĕвел аннă вăхăтра намаз вулани намăс кăна мар, çав тери пысăк çылăх та шутланать. Çак *чарăвăн* тепĕр уççи этемĕн сывлăхĕпе çыхăннă, хĕвел аннă чухне кĕнеке вуланăшăн анне мана яланах: «Ан вула-ха, ывăлăм, куçу пĕтет», – тесе асăрхаттаратчĕ.

**Терминсем çинчен**: мĕн вăл *ĕненӳ* тата мĕн вăл *чару*? *Ĕненӳ* ăнлавăн чăваш чĕлхинче темиçе пĕлтерĕш.

1) Ахаль ĕненӳ, тĕслĕхрен: *Эпĕ Пинерпи Атнера юратнине ĕненетĕп; Ĕненетĕн-и, ĕненместĕн-и, вăл ĕнер сунартан кашкăр тытса килнĕ*. Е тата: *Эпĕ сана ĕненсех каймастăп-ха*. Кунта *ĕненӳ (ĕненни)* сăмах синонимĕ – *шанăç (шанни).*

2) Тĕнпе çыхăннă ĕненӳ, тĕслĕхрен: *Вăл Христос тĕнне пĕтĕм чун-чĕрипе ĕненет; Чăвашсен авалхи тĕнне ĕненекенсем халĕ те пур.* Иван Одюков «Авалхи ĕненӳсем» статйинче (Ялав 1985: 26–27) шăпах чăвашсен авалхи тĕн тытăмĕ е мифологийĕ çинчен çырнă. Атеизм саманинче *тĕн* (вырăсла: вера, религия) сăмах килĕшӳсĕр шутланнăран автор *ĕненӳ* ăнлавпа усă курнă. Шел те, *ĕненӳ* сăмахăн тепĕр пĕлтерĕшĕ пирки, чăваш халăх сăмахлăхĕнчи пин-пин ларăшпа пĕрлештерсе тăракан йыш çинчен нимĕн те каламан. Николай Ашмаринăн «Чăваш сăмахĕсен кĕнекинче» *ĕненӳ* сăмах – «тĕн» тата «шанăç» пĕлтерĕшсемпе (1929: IV: 119).

3) *Ĕненӳ* – халăх сăмахлăхĕн тĕсĕсенчен (жанрĕсенчен) пĕри. Куратпăр, çак ăнлавăн виççĕмĕш сăпачĕ (ипостаçĕ) те хăйне ĕненме ыйтать. Тĕслĕхрен: *Ача чухне мĕн ĕмĕтленен – ӳссен çав пулать* (ЧПГĂИ ĂА III: 19: 130). Çак сăмахсене те ĕненмесен тата мĕне ĕненмелле, ара, эпир пурте (е пирĕнтен нумайăшĕ) хамăрăн хальхи ĕçĕмĕр патне мĕн ачаран ăнтăлман-и-ха? Куратпăр: *ĕненӳсен* пĕр ушкăнĕ тĕшмĕшлĕхпе пачах та çыхăнман. Тепĕр тĕслĕх: *Вилнĕ çын шăтăкне укçа пăрахмасан леш тĕнчере ăна çĕр памаççĕ пулать* (ЧПГĂИ ĂА I: 102: 306). Православи чиркĕвĕ виле шăтăкне укçа пăрахма, тупăк çине чĕрсе чӳрече ӳкерме, виле шăтăкĕн пĕр енне алăк касма чарать, урăхла каласан – çаксене тĕшмĕш тесе хаклать. Апла-и, апла мар-и – кунашкал *ĕненӳсем* чăвашсен авалхи йăли-йĕркипе çыхăнни иккĕлентермест. Вĕсен пысăкран та пысăк пайĕ **икĕ пайран (е сыпăкран)** тăрать: **малтанхи** – пĕр-пĕр сăпатăн (пайăрлăхăн) е пĕр-пĕр пулăмăн ĕçĕ, палăрăмĕ, курăнăвĕ, **иккĕмĕшĕ** – вĕсен витĕмĕ (результачĕ), тĕслĕхрен: *Пыр ярăнать – ĕçкĕ пулать* (ЧПГĂИ ĂА III: 349: 2).

*Чару* ăнлав Николай Ашмаринăн ахаль пĕлтерĕшпе (1941: XV: 151). Йăнăшмастпăр пулсан, *ĕненĕвĕн* йĕкĕреш хăраххи – *чару* (табу) – чи малтан Виталий Родионовăн ĕçĕнче жанр ятне илнĕ (1982: 102). Чарусенче сăпатăн (пайăрлăхăн), пулăмăн ĕçĕ, палăрăмĕ, курăнăвĕ кăна, витĕмĕ çук, тĕслĕхрен: *Виле пытарса килнĕ чух çаврăнса пăхма юрамасть* (Федотова, 2009: 50).

«Халăх хушшинче… пурнăç чăнлăхĕпе нимĕнле те çыхăнман паллăсене «тĕшмĕшле паллăсем», е «ĕненӳ» тенисем тĕл пулаççĕ, – çырать Ефросиния Сидорова. – Ку терминсем литературăра халĕччен те çирĕплетсе çитмен, мĕншĕн тесен вĕсем калаçупа çыру чĕлхине пирĕн ĕмĕр (XX. – А.Л.) пуçламăшĕнче çеç кĕме пуçланă» (1978: 115). «Ĕненӳ» термин иртнĕ ĕмĕрте тин «çирĕпленме тытăннине» Елена Федотова та палăртать (2009: 11). Икĕ авторпа та килĕшместпĕр. Çак ĕçре эпир ыйту историографийĕпе туллин паллаштараймăпăр, анчах мĕн калани те пуплерĕшсен пĕр пайĕ XIX ĕмĕртех **ĕненӳ** (е çак ăнлав варианчĕсем) ятпа çӳренине туллин çирĕплетме тăрăшăпăр.

**Ĕненӳсемпе чарусен чи малтанхи тĕслĕхĕсем ăçта пичетленнĕ тата вĕсем çинчен кам çырнă?** Виктор Вишневскин «О религиозных поверьях чуваш» статйинче (1846 ç.) «поверье» ăнлав анлă пĕлтерĕшпе: тĕн йăли-йĕрки, тĕшмĕшлĕх, мифологи халапĕсем. Каласа хăварни ытлашши пулмĕ: вăл вăхăтра вырăс фольклор ăслăлăхĕнче те *ĕненӳсене* тĕпчеме пуçламан-ха, Виктор Вишневский те çак жанр пирки уйрăммăн çырман. Анчах вĕсен тĕслĕхĕсем пур: «*Вилене пӳртрен илсе тухнă чухне, вăл каялла ан таврăнтăр тесе, тупăк хыççăн хĕртнĕ чул пăрахаççĕ; Вилнĕ çын шăтăкран ан тухтăр тесе урисемпе пуçĕ тĕлĕнче тупăк таранччен шăчă çапаççĕ; Киремете парне панă укçана илме юрамасть, илсен – çемьере синкер пулать* (2004: 188–191). Çак тĕслĕхсене анлăрах сюжетран илтĕмĕр, вĕсене *ĕненӳ-халап* теме юрать (ун пирки тĕплĕнрех ĕненӳсемпе чарусене ушкăнланă чухне калаçăпăр).

Николай Золотницкин «Корневой чувашско-русский словарь» ĕçĕнче те *ĕненӳ-халапсем* пур: *«Чăвашсем ĕненнĕ тăрăх, тĕтреллĕ çăлтăрсем тухни чухăнлăхра, телейсĕр пурăнас çынсем çуралнине пĕлтерет; çутă çăлтăрсем тин çуралнисене пуянлăхпа телей шантараççĕ; янкăр çутă çăлтăрсем вара патшасем, аслă çынсем тата ыттисенчен уйрăлса тăракан çынсем çуралнине кĕретлеççĕ»* (2007: 199–200).

Александра Фукс икĕ сыпăклă *ĕненӳсене* те: *Пуян та ытлă-çитлĕ пурăнччăр тесе чăвашсем çамрăк мăшăра тырă ампарне вырнаçтараççĕ* (1840: 4), *ĕненӳ-халапсене* те илсе кăтартать: *Пурнăçра усал та канăçсăр пулнă çынсем вилсен те хăйсен килне килме пултараççĕ; Вилсен*

*сăнран нĕрсĕрленнĕ çынсем вăрттăн тухатмăш пулнă теççĕ; Нĕрсĕр сăнлă вилесене тупăкран тухса тухатмăш ĕçне тăвасран чĕринчен тата урисенчен пысăк тимĕр пăта çапаççĕ, тупăкне тимĕр кăшăлпа кăшăллаççĕ* (1840: 14). Çак ĕненӳсем малтан пысăк калăпăшлă халап пулнă, паян вара вĕсем – уйрăм пуплерĕшсем.

Спиридон Михайловăн кĕнекинчи ĕненӳ тĕслĕхĕсенчен хăшĕ-пĕри: «*Кĕçĕн кĕрӳ туйра ухăран персен ухă йĕппи инçете ӳкес тĕк пулас кин нумай пурăнать, çывăха ӳксен – нумай пурăнаймасть* (1972: 64). *Юман çулçи час тăкăнмасан халăха йывăр пулать тет; Ута [тухатласа] пăсакан ырă ут ĕмĕрĕпех тытаймасть*; *Выльăха кĕтӳре сусан (шутласан. – А.П.) çылăх пулать тет; Тăвар çĕре тухса пăрахсан çылăх пулать тет* (1972: 94–95).

Василий Сбоевăн ĕçĕнче туй йăли-йĕркипе çыхăннă ĕненӳсем пур, тĕслĕхрен: *Кĕрӳ каччă пулас арăм килĕнче хăй лармалли вырăна саламатпа çапать, çапла туса туйран усал вăйсене хăваласа кăларать* (1865: 30–31). Ĕненӳсемпе чарусене Василий Магницкий уйрăмах нумай пуçтарнă. «Нравы и обычаи в Чебоксарском уезде» кĕнекере «Поверья и обряды» пайри 389 тĕслĕхрен нумайăшĕ – *ĕненӳсемпе чарусем* (1888: 1–33). Вĕсем Григорий Тимофеевăн «Тăхăрьялĕнче» те сахал мар, тĕслĕхрен: *Хĕвел ансан – çынна япала парса ямаççĕ*; *укçине килтен кăлармаççĕ*; *кивçен çăкăр памаççĕ*; *Çăварни кунĕ хăй патне пыракан çынна минтер çине лартмалла, ахалĕн чăхсем çăмарта тумаççĕ* (1972: 159).

Николай Ашмаринăн «Чăваш сăмахĕсен кĕнекинчи» ĕненӳсемпе чарусен йышне никам та шутламан, анчах вĕсем темиçе çĕртен, тен, пинрен те, иртесси иккĕлентермест. Уйăхпа çыхăннисем йышлă: *Уйăх пĕтнĕ чух кивçен пама юрамасть*; *Кивĕ уйăхра пӳрт лартсан пĕрене час çĕрет* (1929: III: 176; 186). Каласа хăварар: Николай Ашмарин чăваш халăх пултарулăхĕн тĕрлĕ жанрне тĕпчеса çырнĕ ĕçĕсенче ĕненӳсене пăхса тухман[5].

Дюла Месарошăн «Памятники старой чувашской веры» вырăсла куçарса кăларнă кĕнекинче (2000 ç.) эпир тĕпчекен жанра тĕрлĕ вариантпа палăртнă: «малтан каласа хунисем», тĕслĕх – *Икĕ чăх çапăçни – хăна килессе* (2000: 304), «туй ĕненĕвĕсем» – *Çураçнă хыççăн, туй умĕн кĕрӳ каччăн пулас арăмĕн килне кайма юрамасть* (2000: 315), «ытти тĕшмĕшлĕхпе традицисем» – *Тухатмăш çитмĕл çичĕ тĕрлĕ пăсма пултарать теççĕ* (2000: 326), «ача çуратассипе çыхăннă йăла-йĕрке» – *Йĕкĕреш ача çуралсан Турă ял çине мĕнле те пулин пысăк инкек ярать тет* (2000: 312). Пĕтĕмĕшпе вара – ĕненӳсене кĕнекери мĕн пур текстра тенĕ пекех тупма пулать. Тĕслĕхрен: «Çĕнĕ çул» сыпăкран: *Çĕнĕ çул уявĕнче юмăç янă чух ирĕлтернĕ тăхлан шĕвекĕнче хĕç-пăшал евĕрскере курни салтака каясса, пуç кăшăлĕ курни – качча каясса, тупăк евĕрскере курни çĕнĕ çулта вилессе пĕлтерет* (2000: 160). «Тухатласси» сыпăкран: *Туйра тухатмăш пăсасран сыхланас тесен хĕрарăмсемпе хĕрсем çӳçĕнчен е тутăрĕнчен пилеш çулçи чиксе хураççĕ; Хăйĕнпе пĕрле пилеш туратне чиксе çӳрекене тухатмăш витереймест, тата унăн куç ӳкмест* (2000:

[5] Тĕслĕхрен: «Отголоски золотоордынской старины в народных верованиях чувашей» (Чăваш халăх ĕненĕвĕсенчи Ылтăн Урта аваллăхĕн ахрăмĕсем (175–216 с.); «Введение в курс чувашской народной словесности» (Чăваш халăх сăмахлăхĕн курсĕн кӳртĕмĕ) (216–323 с.); «Из чувашских верований и преданий» (Чăвашсен ĕненĕвĕсемпе преданийĕсенчен» (323–330 с.) ĔĔ Ашмарин Н.И. Чувашская народная словесность. Исследования, автобиография, воспоминания, письма. – Чебоксары: изд-во Чуваш. ун-та (Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Тĕпчевсем, автобиографи, аса илӳсем, ĕырусем. – Шупашкар: Чăваш ун-чĕн изд-ви, 2003).

212); чĕр чунсем ҫинчен калакан 40 яхăн сыпăкра кашнинчех *ĕненӳ* е *чару* пур: *Ҫӳлевĕҫе тытакан нумай пурăнаймасть; Мулкач ҫул урлă каҫсан лайăх мара; Хура автан телей кӳрет тет; Ҫăхан кашни ҫыннăн синкерлĕ шăпине пĕлсе тăрать тет* (2000: 85–87). Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ кăларма пуҫланă «Чăваш халăх пултарулăхĕ» вырăсла-чăвашла ярăмри «Ĕненӳсемпе чарусем» том йĕркелӳҫи архивсенчи ал ҫырусенчи тĕслĕхсемпе кăна усă курни ҫителĕксĕр пулĕччĕ, вĕсене Дюла Месарошпа ытти авторсен кĕнекисенче те шырамалли иккĕлентермест.

Ĕненӳсемпе чарусем ЧПГĂИ Ăслăлăх архивĕн фончĕсенче шутласа кăларайми. 1904 ҫулта пичетлесе кăларнă ятарлă программăра Николай Никольский вырăнсенче халăх сăмахлăхне пуҫтаракансене ҫак ыйтусене сĕннĕ: «кивĕ хăвăлсене ĕненни», «мĕнле йывăҫсен, ӳсен-тăранăн вăрттăн хăват пур теҫҫĕ», «халапсемпе тĕшмĕшсем», «усăллă тата сиенлĕ чĕр чунсем», «чĕр чунсемпе тĕл пулнă чухнехи паллăсем», «купăста каснă чухнехи йăла-йĕркепе паллăсем», «килĕшӳсемпе ҫыхăннă тĕшмĕшлăх», «пепке чунне ангел илсе килни, вăл ача ҫуралнă чухне юнашар тăни ҫинчен ĕненӳсем пур-и», «тĕлĕксене ĕненни», «чăвашсем виле пытарни: паллăсем» (Никольский 1904) Кунта *паллă* ăнлав – *ĕненӳ* тата *чару* синонимĕ.

Николай Никольскин ҫирĕм страницăран тăракан тепĕр Ыйтăмĕ пысăк тиражпа пичетленсе сарăлнă хыҫҫăн (1919 ҫ.) халăх сăмахлăхĕн мĕн пур тĕсне пырса тивекен пур енлĕ те анлă кунашкал программăсем совет саманинче урăх пулман. Тухнисенче те, тĕслĕхрен, 1949 ҫулхи «Фольклор пухакансен мĕн пĕлмелле. Халăх пултарулăхне пухмалли йĕрке» ыйтăма ваттисен сăмахĕсемсĕр пуҫне ытти паремие кĕртмен. 1987 ҫулта тухнă «Чăваш халăх сăмахлăхĕ» ыйтăмра тинех «паллăсемпе ĕненӳсене» те пухмаллине кăтартса хăварнă.

Совет саманинче чăваш халăх пултарулĕхне тĕпчесе ҫырнă пĕр ĕҫре те ĕненӳсемпе чарусем валли пĕр ыра сăмах та тупăнманнине палăртса хăвармалла. Чăваш гуманитари ăслăлăхĕсене – пĕтĕмĕшпе, фольклор тĕпчевҫисене пайăррăн чыс кӳмен ҫак чăнлăха Ефросиния Сидорова ҫапларах ăнлантарать: «Фольклор пухакансем те, тĕпчевҫĕсем те сăнавсемпе паллăсене уйрăм жанр тесе тишкермен. Пĕрисене, вĕсен формине кура, ваттисен сăмахĕсен шутне кĕртнĕ, теприсене ĕненӳсемпе пĕрле пăхнă» (1984: 11–12). «Чăваш халăх сăмахлăхĕ» ярăмри «Вак жанрсем» том ум сăмахĕнче Ефросиния Сидорова хăй те ытларах ҫанталăк сăнавĕсем ҫинчен ҫырнă. «Тĕшмĕшле паллăсемпе» «ĕненӳсем», автор шухăшĕпе, «пурнăҫра сăнаса пынă опытран мар, авалхи ҫын тĕлĕнмелле асамлă вăйсене ĕненнинчен пулнă». Куратпăр, тĕпчевҫĕ ҫак пуплерĕшсене мифологипе тĕрĕсех ҫыхăнтарать. Ефросиния Сидорова хăш-пĕр «тĕшмĕшле паллăсем» «сылтăм» тата «сулахай» ăнлавсемпе ҫыхăннине, вĕсенчен нумайăшне ҫамрăксене, ача-пăчана вĕрентес, тĕрĕс воспитани парас тĕллевпе каланине, вĕсене тĕшмĕшле паллăсем теме май ҫуккине палăртса хăварать. Ҫапах та авторăн тĕллевĕ – вулакана «тĕн сĕрĕмĕпе ҫыхăннă паллăсем, тĕшмĕшле халапсем хуҫалăхра усă пама мар, сиен кӳме ҫеҫ пултарнине» ĕнентересси (1984: 13–14). Ҫавăнпа та вăл хăйĕн ĕҫĕнче *ĕненӳсене* ушкăнлас ыйтăва пачах та хускатман, кĕнекене *ĕненӳсемпе чарусен* пĕр тĕслĕхне те кĕртмен. Ыйту тухса тăрать: кĕртмен пулсан, ҫак пуплерĕшсем пирки ум сăмахра сăмах ваклани кирлехчĕ-и? Ҫак ыйтăва Виталий Родионов профессор уйрăм калаҫура уҫса пачĕ: кĕнеке йĕркелӳҫи ĕненӳсен тĕслĕхĕсене пичете хатĕрлесе панă-мĕн, анчах институт ертӳлĕхĕ вĕсене кĕнекене кĕрттермен.

**Ĕненӳсемпе чарусене чикĕлесси ҫинчен.** Маларах эпир икĕ сыпăклă *ĕненӳсемпе* пĕрлех *ĕненӳ-халапсем* пуррине палăртрăмăр. Николай Никольский паремисен тепĕр жанрне – ваттисен

сăмахĕсене – анлă содержанин ылмаштаруçи (заместителĕ) (1921: 81), кăткăсрах хайлавăн – юптару, калав, юмах – идейипе сюжечĕн «хăйми»[6] тет (1958: 121). *Ĕненӳсемпе* тата *чарусемпе* те çавнашкал метаморфоза пулса иртнĕ теме юрать. Виталий Родионов ĕненӳсемпе чарусене проза тексчĕсен уйрăм формисем тесе палăртать, анчах жанрсем тесе çирĕплетсех каламасть, çакăн сăлтавĕ – «сăмах пултарулăхĕпе йăла-йĕркен çак формисен хушшинчи чикке специалистсем хальлĕхе палăртайман-ха» (1982: 102). Çак шухăшсемпе Галина Ильина та килĕшет (2014: 49–50). Чикĕлес ыйтăва татса паманнине, пайăррăн каласан – чăваш фольклор ăслăлăхĕнче «сăнавсемпе паллăсене, ĕненӳсемпе тĕлĕксене тĕпчесе çырнă пĕр ĕç те çуккине» Ефросиния Сидорова та çирĕплетет (1984: 60). Чылай çул иртсен Виталий Родионов аса илтерет: «Чăваш фольклористикинче жанрсен чиккине палăртас ыйтусем халĕччен ятарлă тĕпчев обӳекчĕ пулман» (2006: 4).

Чăнлăхшăн каласа хăварар: чăваш *халăх халапĕнчен* (фольклорĕн. – А.Л.) ушкăнлавне 1927 çултах Гурий Комиссаров (Вантер) сĕннĕ. Пурĕ 18 жанра палăртнă, çав шутран 15-мĕшĕ – тĕлĕк уççисем, 16-мĕшĕ – *тĕшмĕшле сăмахсем*, 17-мĕшĕ – çанталăк сăнавĕсем (1989: 19). «Тĕшмĕшле сăмахсем» кунта *ĕненӳсемпе чарусене* пĕлтерни иккĕлентермелле мар. Шел те, жанрсене чикĕлес ĕçе тĕпчевçĕ малалла тăсайман. Куртăмăр ĕнтĕ: ун хыççăнхи тĕпчевçĕсем çак ĕçе теори шайĕнче халĕ те пуçăнман.

Чăваш фольклористикинче *ĕненӳсемпе чарусене* пĕрремĕш хут туллин «Чăваш халăх пултарулăхĕ» ярăмри «Сăнавсемпе ĕненӳсем. Тĕлĕксем» томра пичетлесе кăларнă (Федотова 2009). Ку – ырламалли пулăм. Анчах çанталăк сăнавĕсемпе ĕненӳсене тата чарусене хутăш вырнаçтарни, паллах, пачах та тĕрĕс мар, вĕсене уйăрмаллах пулнă, мĕншĕн тесен çак вăхăт тĕлне чăваш фольклор ăслăлăхĕ вĕсене уйрăм жанрсем тесе пĕтĕмлетме пикеннĕ ĕнтĕ. Шăпах çак кĕнеке ум сăмахĕнче Виталий Родионовпа Ефросиния Сидорова, Галина Ильина эпир тишкерекен жанрсене чикĕлес тĕлĕшпе хускатнă ыйтăва малалла атлантарни, *ĕненӳсемпе сăнавсем* чăннипех те уйрăм тĕс пулнине çирĕплетни кирлехчĕ.

*Ĕненӳсемпе чарусем* паремисен йышне кĕреççĕ. Вĕсене *паремиологи* – филологи ăслăлăхĕн пайĕ, фразеологин çум пайĕ – тĕпчет. Пареми авалхи грекларан (παροιμία) куçарсан *ытарлăх*, *каларăш* тенине пĕлтерет. Çапла вара, ĕненӳсемпе чарусем сăнавсемпе, тĕлĕксемпе, ваттисен сăмахĕсемпе, афоризмсемпе, тупмалли (сутмалли) юмахсемпе пĕрле халăх сăмахлăхĕнчи вак тĕссен (жанрсен) йышĕнче. Вак, эппин, – пĕчĕк калăпăшлă, анчах пĕчĕк пĕлтерĕшлĕ мар. Пĕтĕмĕшпе – халăх сăмахлăхĕнче сахал е пĕчĕк пĕлтерĕшлĕ тĕссем çук, пулма та пултараймаççĕ. Миф-и е юмах-и, юрă-и е такмак-и, ваттисен сăмахĕ-и – вĕсем пурте, пĕрремĕшĕнчен, халăхăн сăмах вĕççĕн çуралса аталанса, халĕччченех сыхланса юлнă пултарулăхĕн палăкĕсем, иккĕмĕшĕнчен, вĕсен пурин те пархатарлă тĕллев, вĕсенче халăхăмăрăн историйĕ çырăнса юлнă, вĕсен вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнчи витĕмĕпе пĕлтерĕшĕ нимĕнпе хаклайми.

Эпир тĕпчекен пуплерĕшсем композицийĕпе (тĕпрен илсен икĕ пайлă е икĕ сыпăклă) ваттисен сăмахĕсене çывăх, анчах илемлăх енĕпе вĕсенчен тĕпрен уйрăлса тăраççĕ. Ваттисен сăмахĕсенче ытарлăн калани, тĕслĕх: *Çукăн çĕрĕ хытă* (ЧПГĂИ ĂА I: 138: 441), метафора: *Ансат алла та касать* (ЧПГĂИ ĂА III: 311: 673), метоними: *Çĕвĕç вăрламасть – хаччи вăрлать* (ЧПГĂИ ĂА III: 311: 673), ассонанс: *Усал усала уй урлă курать* (ЧПГĂИ ĂА III: 311(4): 932), аллитераци:

[6] Вырăсла текстри «сгущение» ăнлава «хăйма» тени тĕрĕсрех-тĕр, «тĕшĕ» теме те юратчĕ.

*Тутар тутантарӗ, тута урлӑ туянтарӗ* (ЧПГӐИ ӐА III: 311(3): 874) питӗ анлӑ сарӑлнӑ. Ӗненӳсемпе чарусем вара мӗн калас тенине пӑтана мӑлатукпа ҫапса лартнӑн тӳррӗн евитлеҫҫӗ: *Ҫатма аврипе ҫынна ҫапакан чӗлхесӗр пулать тет* (ЧПГӐИ ӐА I: 28: 305), *Кӗҫнерни кун, юн кун мунча кӗме юрамасть* (ЧПГӐИ ӐА III: 751: 168), *Яла куккук пырсан вут тухать тет* (ЧПГӐИ ӐА I: 358: 157).

**Ӗненӳсемпе чарусене ушкӑнлани (классификаци).** Вӗсене шалашӗ (содержанийӗ) е тӗп тӗллевӗсем (шухӑшӗсем) енӗпе **2 ушкӑна** уйӑрма пулать. **Пӗрремӗшне** ҫынсене пурнӑҫра терт-нуша, синкер курас мар тесен апла е капла тумалла мар, ӑна е кӑна уямалла, пӑхӑнмалла тесе вӗрентекен тӗслӗхсем кӗреҫҫӗ: *Тумтир ҫӗлесе пӗтернӗ ҫӗре ҫип пӗтсен ҫынӗ вилет тет* (ЧПГӐИ ӐА IV: 11: 306). Ҫак сӑмахсене ӗненетӗн-и е ҫук-и – анчах ҫӗлеме ларас умӗн мӗн кирлине малтанах хатӗрлесе хумалла. *Каҫ пулсан урама ҫӳп тухса тӑкмаҫҫӗ* (Федотова 2009: 88). Ку – чару. Чӑнах та апла тума юраманнине ҫак ӗненӳ ҫирӗплетет: *Ҫӳп-ҫапа каҫхине кӑларса тӑксан лайӑххи те тухса каять тет* (Федотова 2009: 191). *Хӗрӗн хӑйӗн туйӗнче ташлама, юрлама, такмак калама юрамасть – лайӑх пурӑнмаҫҫӗ теҫҫӗ* (Федотова 2009: 242). Куратпӑр: кунашкал пуплерӗшсене асра тытмалла ҫеҫ, вара пӗтӗмпех йӗркеллӗ пулса тухать тесе ӗненмелле. Пуплерӗшсен **тепӗр** ушкӑнӗ этем мӗн тӑвас е мӗн тӑвас мар тенипе пачах та ҫыхӑнман, тӗслӗхрен: *Типӗ кунӗ аслати авӑтсан ӗне сӗт памасть тет* (ЧПГӐИ ӐА III: 7: 33), *Пӗлӗт ҫинче хӗрес курӑнсан вӑрҫӑ пулать теҫҫӗ* (ЧПГӐИ ӐА I: 650), *Хӗр качча кайнӑ чух ҫӑхан курсан лайӑх мар теҫҫӗ* (ЧПГӐИ ӐА I: 650).

Анчах ку ансат ушкӑнлав ҫеҫ. Ӑслӑлӑх классификацийӗ вӑл – тӗпчев е сӑнав объекчӗсене вӗсен пӗтӗмӗшле (пӗрлехи) палӑрӑмӗсемпе килӗшӳллӗн ушкӑнланин тытӑмӗ (системи). Акӑ икӗ *ӗненӳ*: *Ывӑҫ тупанӗ кӗҫтесен ҫынна хӗнессе теҫҫӗ; Ывӑҫ тупань кӗҫтесен укҫа тупать теҫҫӗ* (ЧПГӐИ ӐА I: 650). Кунта объект – ывӑҫ тупанӗ, вӗсем кӗҫтеҫҫӗ, ҫакӑн тӗллевӗ – е ҫынна хӗнесси, е укҫа тупасси. Ҫак пуплерӗшсене, паллах, пӗр ушкӑна кӗртмелле.

Ӗненӳсемпе чарусене, ҫанталӗк сӑнавӗн тӗслӗхӗсене, тӗлӗксене чи малтан 1888 ҫултах Василий Магницкий ушкӑнланӑ: **1) атмосфера пулӑмӗсем пирки малтанах хыпарлани,** тӗслӗх: *Кушак пӑрусемпе пӗрле утӑ ҫисен – ҫанталӑк пӑсӑласса*; **2) тыр-пул, выльӑх апачӗ ҫитменни, пурлӑх енӗпе тупӑш е тӑкак, вӗсем пирки малтанах хыпарлани:** *Пӳртре хура тараккансем ӗрчени – пуясса;* **3) Хӗрарӑмӑн ҫие юлни, ача ҫуратни:** *Ача ҫуратайман хӗрарӑм тепӗр хӗрарӑм ача ҫуратнӑ вырӑна ларсан ҫурататех*; **4) инкек-синкек, чир-чӗр, вилӗм, вӗсем пирки малтанах хыпарлани:** *Шӑши ураран ҫыртни ырра мар;* **5) Маслӑ ялӗнче (Кивьялта) чӑвашсем усӑ куракан эмел курӑкӗсем,** *Хӑнкӑла курӑкӗ: хӑнкӑласене пӗтерме шӑтӑксене хураҫҫӗ;* **6) мӑшӑрлану юмлавӗ (юмӑҫ яни), йӑли-йӗрки:** *Венчете тӑнӑ чухне чиркӳре виле выртни – ҫамрӑк мӑшӑр япӑх пурӑнасса;* **7) кулленхи ӗненӳсемпе йӑла-йӗрке:** *Урӑх ҫын апатне ҫисен ҫав ҫыннӑн вӑйне илетӗн теҫҫӗ;* **8) тӗлӗксем, вӗсен пӗлтерӗшӗ:** *Ҫывӑрнӑ чухне калаҫакан ҫыннӑн ятсӑр пӳрнине тытсан вӑл тӗрӗссине пӗтӗмпех калать* (1988: 1–33).

Куратпӑр: кунта тиркемелли ҫук мар. Сӑмахран, 5-мӗш ушкӑн ӗненӳсемпе пачах та ҫыхӑнман. Кунсӑр пуҫне, пуҫтаруҫӑ чӑваш, тутар, вырӑс халӑхӗсен *ӗненӗвӗсемпе сӑнавӗсене, чарӑвӗсене* пӗр-пӗринчен уйӑрман.

Василий Магницкин классификацийӗ хыҫҫӑн тепӗр 115 ҫул иртсен *ӗненӳсемпе чарусен* тата *тӗлӗксен* (вӗсене пӗр-пӗринчен уйӑрмасӑр) ушкӑнлав ӗҫне Вячеслав Ендеровпа Виталий Родионов пуҫӑннӑ, пуплерӗшсене объект ячӗпе, тӗслӗхрен, лаша, акӑш, кушак, тата ӑнлавсем

тӗлӗшпе ушкӑнлама сӗннӗ (2004: 119–120). В.А. Ендеров ҫак паремисене (вӗсен йышне вӑл тӗлӗксемпе чарусене те кӗртет) результатне кура ушкӑнлать, 9 ушкӑна пайлать:

**1. Пурнӑҫпа йӑла ӗненӗвӗсем.** Вӗсем обществӑн пӗтӗмӗшле пурнӑҫӗпе тата халӑх йӑли-йӗркипе ҫыхӑннӑ, унта ҫемьепе йӑла ыйтӑвӗсем, ҫемьепе ӑру хутшӑнӑвӗсем, моральпе йӑла-йӗрке ыйтӑвӗсем сӑнарланнӑ: *Кушак питне ҫусан хӑна килет теҫҫӗ.*

**2. Ҫанталӑк ҫинчен:** *Хӑлха шӑтӑкӗ кӗҫӗтсен тӑман пулать.*

**3. Тырӑ-пулӑ ҫинчен:** *Ҫӗнӗ ҫул каҫ киле пуян ҫын пырсан тырӑ лайӑх пулать.*

**4. Мифла ӗненӳсем:** *Ҫинҫере ҫӗр чавсассӑн аҫа ҫапать тет.*

**5. Инкек-синкек ҫинчен:** *Ял урлӑ акӑш каҫса кайсан вут тухать теҫҫӗ.*

**6. Чӗр чунсем ҫинчен:** *Ӗнене шӑпӑрпа ҫапсан ӗне хӗсӗр юлать теҫҫӗ.*

**7. Этем шӑпи ҫинчен (пурнӑҫӗ, вилӗмӗ, чир-чӗрӗ т. ыт. те):** *Сӑмса тӑрри кӗҫӗтсен ҫын вилет теҫҫӗ.*

**8. Тӗрлӗ хыпарсем е пӗлтерӳсем ҫинчен калаканнисем.** Вӗсем ытларах этем организмӗпе, килте куллен усӑ куракан е хуҫалӑхри япаласемпе ҫыхӑннӑ: *Хӑлхасем кӗҫӗтни – хыпара: сылтӑмми кӗҫӗтсен – лайӑха, сулахаййи кӗҫӗтсен – начара.*

**9. Дидактикӑлла ӗненӳсем** ҫамрӑксене йӗркелӗхе, илемлӗхе тата ӗҫлӗхе вӗрентеҫҫӗ: *Йӗтӗрпе ҫапсан хӑлхасӑр пулать тет* (2004: 252–254).

Ҫак ушкӑнлав пулса ҫитнӗ теме май ҫук, акӑ ӗненӳсемпе чарусен пӗр пайӗ нихӑш ушкӑна та лекеймест, тӗслӗхрен: *Ватӑрах ҫын вӑрман касма пуҫласан час ҫитӗнет* (НА ЧГИГН I: 247: 173); *Вӑрманта ҫӗтсе ҫӳренӗ чухне урари ҫӑпатасене улӑштарса тӑхӑнсан ҫул тупатӑн теҫҫӗ* (НА ЧГИГН I: 75: 184). Чи кирли – пуплерӗшсене ушкӑнсенче мӗнлерех пайласа тухмалла: алфавитпа-и, тӗп сӑмахсене кура-и е тата ытти меслетпе-и?

Елена Федотова пухса йӗркеленӗ «Сӑнавсемпе ӗненӳсем. Тӗлӗксем» кӗнекере тӗслӗхсене тӗп сӑмахсем тӑрӑх (вӗсем ҫав тери йышлӑ, хӑшӗ-пӗри пӗр е икӗ пуплерӗшрен кӑна тӑрать), тӗп сӑмахсене алфавит йӗркипе вырнаҫтарнӑ. Ку – чи ансат ушкӑнлав. Чи пысӑк ҫитменлӗх: тӗрлӗ сӑмахран пуҫланакан пуплерӗшсем (варианчӗсем мар) тӗрлӗ ҫӗре лекни. Тӗслӗхрен: тӗп сӑмах – *пуҫ*: *Ҫӗлӗке ҫавӑрса тӑхӑнсан пуҫ ыратакан пулать теҫҫӗ* (2009: 137); тӗп сӑмах – *ҫӗлӗк*: тӗслӗхӗ ҫавах (2009: 171). Тӗп сӑмах – *выльӑх*: *Выльӑхсене шӑпӑрпа тӗкӗнме юрамасть – хӗсӗр пуласран* (2009: 65); тӗп сӑмах – *шӑпӑр*: тӗслӗхӗ ҫавах (2009: 261). Асӑннӑ кӗнекере ҫапла пӗр каларӑшах темиҫе ҫӗрте вырнаҫни ытлашшипех.

Фольклористикӑра паремисене темӑна кура ушкӑнласси чи анлӑ сарӑлнӑ меслет. Чӑн та, ун чухне те ҫитменлӗхсемсӗр мар, мӗншӗн тесен *ӗненӳсемпе чарусенчен* нумайӑшӗ нумай темӑллӑ. Тӗслӗхрен: *Кӑмакара ҫатма ҫурӑлсан – ырра мар* (Федотова, 2009: 94). Кунта тӗп сӑмах, паллах, *ҫатма*. Анчах ҫак тӗслӗхе «Кӑмака» ятлӑ пая та кӗртме пулать. Тепӗр тӗслӗх: *Хӗлле ҫӑлтӑр ӳксен ҫын вилет теҫҫӗ* (ЧПГӐИ ӐА I: 650). Кӗнекере ҫулталӑк вӑхӑчӗсем, космосри япаласем ҫинчен, этем ҫинчен, вилӗм ҫинчен уйрӑм пайсем пулсан ҫак пуплерӗше ӑҫта вырнаҫтармалла?

Григорий Пермяков татӑклӑн ҫирӗплетет: пуплерӗшсен ушкӑнлав тытӑмӗсемӗнчен пӗри те жанрӑн обӳективлӑ теорине туса хума май памасть (1988: 13). Ҫапах та тема тӑрӑх ушкӑнлани

ăнăçлăрах та вырăнлăрах, уçăмлă та палăрăмлă. Пайсен ячĕсен сахал сăмахлă, кĕске, тулли пĕлтерĕшлĕ пулмалла.

Эпир çакăн пек ушкăнлав сĕнетпĕр:

**1. Выльăх-чĕрлĕх:** *Вăкăр тĕксен – чирлессе* (ЧПГĂИ ĂА III: 2227: 36);

**2. Ĕçме-çиме**: *Апат çинĕ чух юрласан – макăрасса* (ЧПГĂИ ĂА I: 650);

**3. Кайăк-кĕшĕк, тискер кайăксем, хурт-кăпшанкă:** *Кил-çурт таврашне (кил хушшине) каюра ерсен тĕтĕм сӳнет теççĕ* (ЧПГĂИ ĂА I: 650);

**4. Кил-çурт, унта куллен тыткалакан япаласем, ĕç хатĕрĕсем**: *Кăнчалаççи çине сӳсне çӳле çаксан хунямăшĕ хаяр пулать теççĕ* (ЧПГĂИ ĂА I: 650);

**5. Мифсенчи сăнарсем, леш тĕнче**: *Киремет чӳк тусан çумăр пулать теççĕ* (ЧПГĂИ ĂА I: 650);

**6. Социаллă пулăмсем**: *Кашкăр нумайлансан выçлăх çул пулать теççĕ* (ЧПГĂИ ĂА I: 650);

**7. Çулталăк вăхăчĕсем, уйăх тата эрне**: *Кĕркунне çĕр çул урлă çурăлсан халăха пурăнма йывăр килет теççĕ* (ЧПГĂИ ĂА I: 650);

**8. Çут çанталăк пулăмĕсем**: *Сарамат кĕперри çине пӳрнепе кăтартсан усал ерет теççĕ* (ЧПГĂИ ĂА I: 650);

**9. Тĕнче уçлăхĕнчи япаласем**: *Çĕнĕ уйăха сылтăм хул пуççи урлă курсассăн ырă курасса теççĕ* (ЧПГĂИ ĂА I: 650);

**10. Тĕн: календарь уявĕсем, йăла-йĕрке, атрибутсем**: *Кĕтесрен турăш ӳксессĕн çемьере çын вилет теççĕ* (ЧПГĂИ ĂА I: 650);

**11. Тумтир, атă-пушмак**: *Çăпата кантри алăкран хĕсĕнсе ларсан çын килет теççĕ* (ЧПГĂИ ĂА I: 650);

**12. Ӳсен-тăран, йĕри-тавралăх**: *Улмуççи çулçи тăкăнмасан хĕрарăмсене йывăрлăх пулать* (ЧПГĂИ ĂА I: 240: 7);

**13. Этем: ӳт-пӳ пайĕсем, тăрăмĕ, кăмăл-туйăмĕ**: *Аялти тута кĕçĕтсен – кучченеç çиетĕн* (ЧПГĂИ ĂА III: 643: 76);

**14. Ял хуçалăх ĕçĕсем**: *Акана тухиччен çĕр çине патакпа çапмаççĕ, çапсан тырă çĕрет* (ЧПГĂИ ĂА III: 435: 159);

---

**15.** *Ĕненӳсемпе чарусен* пĕр йышне уйрăм ушкăна кĕртмелле. Ыттисенчен вĕсем хăйсене туллин ăнлантарса панипе уйрăлса тăраççĕ, пулма пултаракан синкертен, япăх ытти пулăмран асăрханма, вĕсене çĕнтермешкĕн хатĕр пулма вĕрентеççĕ. Акă пирĕн ушкăнлавăн 5-мĕш пайне кĕрекен тĕслĕхсенчен пĕри: *Ачана йăран çине вырттарнăран ана Ийи тулана. Ача пăсăлать вара, йĕрет тата хăш чух алли-ури е çурăмĕ пĕкĕрĕлсе тухать* (Ашмарин 1928: I: 235). Кунта эпир мифри темĕнле усал вăй ачана чирлеттернине куратпăр. Анчах ăна мĕнле сыватмалла-ха? Ача амăшĕ ку ĕненĕве пĕлес тĕк, паллах, пепкине йăран çине вырттармастчех. Пĕлменнипе ачине хурсан, вăл чăннипех те чирлесен вара (ахăртнех, çĕр нӳрлĕ пулнăран, уçă çил вĕрнĕрен е ытти сăлтавпа)? Çак пуплерĕшĕн уççи-хуппине пĕлмен çынсем валли тепĕр *ĕненӳ* пур, унта йăран çинче выртнăран чирленĕ ачаран усал сывлăша хăваласа кăлармалли меслет пирки каланă: *«Кăкăр ачи пит*

*макăрсан, час-час чирлесен ачана Ийе çулăхнă теççĕ. Ачана сыватас тесе 5 е 7 çăмах тăваççĕ те: «Ийӳе, ан çулăх, каçар!» – тесе пĕçермесĕрех чӳречерен кăларса пăрахаççĕ. Çăмахĕсене кив çăнăхран кăна тума юрать. Çĕнĕ тыр-пултан авăртнă çăнăхран юраман, хăйсен пулмасан кӳршĕрен кайса илнĕ кив çăнăх»* (Месарош 2000: 45–46).

Ку тĕслĕх миф çинче никĕсленнĕ. Авалхи чăвашсем ĕненнĕ тăрăх – уйра *Уй турри, Уй перекечĕ, Уй пăхакан, Уй сыхчи* пурăнаççĕ, *Уй турри* тыр-пула çум куракĕенчен, выльăх-чĕрлĕх таптасран сыхлать, чи малтанах – ĕçчен çынсенне. Уйри йăрансем тăрăх *Аслă Турă* тата *Пирĕшти* çӳреççĕ. Вĕсем çук чухне вара усал вăйсем хуçаланаççĕ, çавăнпа та йăран çинче çывăрма та, ларма та, апат çиме те юрамасть. Çывăрас пулсан та çын тавра тимĕр япаласем хумалла е вĕсемпе йĕри-тавра чĕрсе тухмалла (Антипина 2018: 356).

Тепĕр ĕненĕве фольклор пуçтаруçă «Пыл хурчĕсем çинчен» ят панă: «*Вĕсен (пыл хурчĕсен. – А.Л.) пурнăçĕ телейлĕ пултăр тесен мĕн пур çынпа туслăн, килĕштерсе пурăнмалла, халăх çинче никама та хур тумалла мар, улталамалла мар. Кама та пулин кӳрентерсен çав çын ылханать те çакна пула хуçалăхри пыл хурчĕсем вилеççĕ. Хурт çăвăрне (вĕллерен уйрăлса тухнă хурт йышĕ) илнĕ чухне питĕ асăрханмалла, çак ĕçе никам та ан куртăр, хӳме шăтăкĕнчен е çатан картаран никам та ан пăхтăр, ют çын пăхсан пыл хурчĕсем лăпкă пулмаççĕ, пыл тумаççĕ. Вĕлле хурчĕсемпе ĕçлеме пуçлас умĕн арçыннăн таса пулмалла, арăмĕпе çывăрма юрамасть* (ХФУ ĂБ: 2376: 477).

Пĕрре пăхсан ансат пек курăнакан çак текст тăвать *ĕненӳпе чаруран* тăрать, вĕсем халăхра уйрăммăн та çӳреççĕ, пĕрле илсе кăтартсан вара ĕненес витĕм палăрмаллах вăйланать. Чăваш мифологийĕнче пыл хурчĕ – *Аслă Турă* пултарнă чĕр чун тĕнчин чи малтанхи сăпачĕсенчен (элеменчĕсенчен) пĕри. Малтанах пыл хурчĕсем Турă çӳçĕ хушшинче пурăннă, вĕсенчен *Турă* культурăллă ӳсен-тăран туса хунă, çавăнпа та тырăсенчен хăшĕ-пĕрин хылчăкĕсем пыл хурчĕн сăнни евĕр, теприсем вара çыхланса ӳссе хурт çăвăрĕ пек курăнаççĕ (Антипина 2008: 393).

Тепĕр тĕслĕх: *Мăнкун кунĕ арча тавраш*н*е уçса хупма юрамасть. Апла уçса хупсан çил-тăвăл çав çул çурт тăрринчи улăм çивиттийĕсене сирпĕтет. Çапла ан пултăр тесе Мăнкун кунĕ тăхăнмалли кĕпе-йĕмсене малтанах арчаран илсе тухса хураççĕ* (ЧПГĂИ ĂА I: 215: 517).

Кунашкал сюжетсене, *ĕненӳсемсĕр* пуçне, фольклорăн ытти пĕр тĕсĕн картине те пухса ĕретлейместĕн. Вĕсене, хутлă е темиçе сыпăклă ваттисен сăмахĕсемпе евĕрлесе, ***хутлă ĕненӳсем*** е ***ĕненӳ-халапсем, е сюжетлă ĕненӳсем*** теме пулать. Эпир **ĕненӳ-халап** тени тĕрĕсрех те пайăртарах тетпĕр. Вĕсене темăсем тăрăх та, тĕп сăмахсем тăрăх та ушкăнлама пулать. Иккĕмĕш мел вырăнлăраххăн туйăнать, мĕншĕн тесен вĕсенче тĕп сăмах кĕретĕн, уççăн курăнса тăрать. Илсе кăтартнă тĕслĕхсенче тĕп сăмахсем *Ийе, Пыл хурчĕ, Мункун* пулни никама та тавлаштармасть ахăр.

**Тĕрлĕ халăхăн ĕненӳсемпе чарăвĕсене танлаштарса тишкересси çинчен.** Чăваш халăх сăмахлăхĕн жанрсен тытăмĕнче *ĕненӳсемпе чарусем* (табусем) мĕнлерех вырăн йышăнни пирки халĕччен пĕр тĕпчев ĕçĕ те пулманнине эпир маларах палăртса хăварнăччĕ. Апла тăк паремисен çак тĕсне кӳршĕ халăхсен тата тăванла тĕрĕк халăхĕсен çак жанрĕпе танлаштарса никам та тишкерменни те паллă. Çак ыйту, ăнланмалла ĕнтĕ, ятарлă, уйрăм, тĕплĕ тĕпчев пулмалла. Çавăнпа та хамăрăн шухăша кĕскен кăна палăртса хăварăпăр. Вырăс, тутар, мордва (ирçе-мăкшă), çармăс (мари), удмурт (вотяк), крешĕн, чăваш халăхĕсем авалтанпах юнашар пурăннăран вĕсен

йӑли-йӗркинче, ӗненӗвӗнче (анлӑ пӗлтерӗшпе, паремисенче ҫеҫ мар) пӗрешкеллӗхсем нумайййинчен тӗлӗнмӗпӗр.

Акӑ *ӗненӳ* тӗсӗн эрне кунпа ҫыхӑннӑ тӗслӗхӗсем: **чӑвашсен:** *Ӗҫ пуҫланӑ чух эрне куна телейлӗ тесе шутламаҫҫӗ* (ЧПГӐИ ӐА I: 650), *Кӗҫӗн эрне кун каҫ кирек мӗн ӗҫлесен те ҫылӑх пулать* (ЧПГӐИ ӐА I: 102: 310); *Эрне кун ҫӗнӗ япала тӑхӑнсан пӗр эрнелӗх ҫех пырать теҫҫӗ* (ЧПГӐИ ӐА I: 650); **ҫармӑссен**: *Эрне кун кӗпе-йӗм ҫума, урай ҫума юрамасть, ҫуса ҫылӑха кӗнӗшӗн леш тӗнчере таса мар шыв ӗҫтереҫҫӗ*; *Кӗлӗ тума эрне кун тухмалла, мӗншӗн тесен ҫак кун таса, ҫутӑ* (Абукаева 2018: 128); **мордвасен:** *эрне кун кӗпе-йӗм ҫусан, кӗнчеле арласан суккӑрланатӑн* (Борисов 1972: 239).

Ҫак каларӑшсем мифологирен тымарланса тухни иккӗлентермест. Чӑвашсем Киремете чӳк пама ҫулталӑкра пӗрре эрне кун пуҫтарӑннӑ. *«Шӑпах ҫав кун Киремет алӑкӗ уҫӑлса каять. Савӑнпа та чӑвашсен парне пама унта сӑра, эрех, яшка, пыл, така-путек, хур-кӑвакал, хӗрарӑмсен вара пир, сурпан, ҫип илсе пымалла»* (Магницкий 1881: 8). *Эрне ватти* турӑ эрнери йӗркене сыхласа тӑрать, эрне куна уйрӑмах ҫирӗппӗн пӑхӑнма хистет. *«Маслӑ ялӗнчи чӑвашсем ӗненнӗ тӑрӑх, эрне каҫ кӗнчеле арласан Эрне ватти леш тӗнчере ҫав ҫын ҫӳҫне арлать; эрне кун кӗпе-йӗм ҫӑвакана кӗллӗ шыв ӗҫтерет»* (Магницкий 1881: 64–65). Мӑсӑльман тӗнне тытса пыракансемшӗн те эрне кун – чи сӑваплӑ кун: *Аллах ҫак кун пӗрремӗш этеме Адама пултарнӑ; ҫав кунах Хӑйӗн ӗҫӗсене туса пымашкӑн Адама ҫӗр ҫине антарнӑ; Адам эрне кун вилнӗ.* Мухаммад пророк эрне куна кашни эрнерех уявламалла туса хунӑ (Ural-Tatar). Эрне кун хисеплӗ кун пулнине турккӑсен *ӗненӗвӗсенчен* те куратпӑр: *Эрне кун ҫыхма юрамасть – шӑпа япӑхланать; Эрне кун намаз иртиччен йывӑҫ касма юрамасть; Эрне кун акма юрамасть* (http://www.kultur.gov.tr). Христиан-вырӑссен те эрне кун сӑваплӑ шутланать: ҫак кун кӑнтӑрла иртсен виҫӗ сехет тӗлнелле хӗрес ҫине пӑталанӑ Иисус Христос вилнӗ; христиансем асап тӳссе вилнӗ сӑваплӑ Параскева Эрне куна уйрӑмах хисеплесе асӑнаҫҫӗ. Анчах эрне кун авалхи славянсен мифологийӗнчех сумлӑ кун пулнӑ, ӑна авалхи вырӑс пантеонӗнчи пӗртен пӗр хӗрарӑм турӑпа Мокошьпа ҫыхӑнтараҫҫӗ. Ҫак кун хӗрарӑмсен пир тӗртме, ачасене ҫӑвӑнтарма, хӑйсен те ҫӑвӑнма юраман, ҫак чарӑва пӑхӑнмасан Мокошь ҫирӗп хаса парать тесе ӗненнӗ (https://www.km.ru/front-projects/russkie-prazdniki).

Куратпӑр: чӑвашсен эрне кунӗпе ҫыхӑннӑ *ӗненӳсем* пире кӳршӗ халӑхсем патне, инҫетри турккӑсен патне илсе ҫитерчӗҫ, ислам тӗнӗпе христианлӑха аса илтерчӗҫ. Ҫапах та вӗсемпе чи малтан хӑш халӑх усӑ курма пуҫланӑ-ха? Атӑлҫи Пӑлхар патшалӑхӗнче ислам 922-мӗш ҫултах патшалӑх тӗнӗ пулса тӑнине, «кӗмӗл пӑлхарсен» чӗлхине пӗртен пӗр чӑваш халӑхӗ упраса хӑварнине пӗлетпӗр. Хусан тутарӗсен пысӑкран та пысӑк пайӗ пирӗн мӑн асаттесем – кыпчак чӗлхипе калаҫма пуҫланӑ, исламран хӑпнӑ пӑлхар-чӑвашсем – пулнине шута илер. Эппин, пӑлхарсен авалхи тӗнӗн, мифологийӗн вакланчӑкӗсем мифсенче, *ӗненӳсемпе чарусенче* юлнӑ теме пултаратпӑр. Юнашар пурӑнакан халӑхсен культурине (анлӑ пӗлтерӗшпе) чӑвашсем пысӑкран та пысӑк витӗм кӳнине истори, чӗлхе ӑслӑлӑхӗсем тахҫанах тӗпчесе ҫирӗплетнӗ ӗнтӗ.

Вырӑс православи христианлӑхӗн культури чӑвашсене витӗм кӳнине те йышӑнмаллах. Акӑ вырӑссем эрнен шӑмат кун хыҫҫӑнхи кунне, Иисус Христос вилсен виҫӗ кун иртсен чӗрӗлсе тӑнине сумласа, *воскресение* теме пуҫланӑ, чӑвашсем вара ӑна *вырсарни (вырӑс эрни) кунӗ* теҫҫӗ. Христиансем ҫак кун ӗҫлемеҫҫӗ, ӑна Иисус Турра кӗлӗ тума халалласҫӗ. *Вырсарни кун ӗҫлесен*

*ытти кун ĕç ăнмасть; сӳс шăртласан Турă çине вĕçсе ларать; шкула кайсан ăс пĕтет* (ЧПГĂИ ĂА I: 650) йышши ĕненӳсене чăвашсем вырăссенчен илни иккĕлентермест.

«Чăн-чăнах хамăрăн» *ĕненӳсемпе чарусене* уйрăм ушкăна пуçтарма пулать-и? Çак ыйтăва хуравламашкăн пирĕн чи малтанах тăванла тĕрĕк халăхĕсен ĕненĕвсемпе чарăвĕсене тишкермелле пек. Акă, чăвашсен *Иккĕн пĕр ал шăллипе шăлăнсан иккĕшĕ часах вăрçса каяççĕ* (ЧПГĂИ ĂА I: 7: 355) ĕненĕвĕн варианчĕ азербайджансен те, вырăссен те анлă сарăлнă. Чăвашсен: *Ал тупанĕ кĕçĕтсен: сылтăм пулсан укçа килет, сулахай пулсан укçа каять теççĕ* (ЧПГĂИ ĂА I: 327: 119), тутарсан: *Ал тупанĕ кĕçĕтсен – услам пуласса,* вырăссен те çавнашкалах: *Сулахай ал тупанĕ кĕçĕтсен укçа пуласса.* Кирек хăш ĕненĕве е чарăва илсен те вĕсен тулли е тĕп шухăшне кăтартакан варианчĕсене ытти халăхсен сăмахлăхĕнче тупатăнах. Çавăнпа та «чăн-чăн хамăрăнне» тупас тĕллевлĕ тĕпчевçĕн вун-вун халăхăн нумай пин пуплерĕшĕпе паллашма тивет. Вăл хăйне тивĕçтерекен пĕтĕмлетӳ тăваясси вара иккĕлентерет. Мĕншĕн тесен *ĕненӳсемпе чарусен* пысăк йышĕ нумай-нумай çул кӳршĕллĕ пурăнакан этноссене уйăрса тăракан ăс-хакăл чиккисенчен каçса пур çĕрте те анлă сарăлнă, хутăшса кайнă.

Пĕтĕмлетӳ:

1. Чăваш халăх сăмахлăхĕнче *ĕненӳсемпе чарусем* жанр шайĕнче хăйсене тивĕçлĕ вырăн йышăнаççĕ;

2. *Ĕненӳпе чару* тĕслĕхĕсене XIX ĕмĕртех пухма пуçланă, XX ĕмĕрĕн пĕрремĕш чĕрĕкĕнче паллă тĕпчевçĕсем Николай Никольский, Николай Ашмарин тата ыттисем пин-пин тĕслĕх пуçтарнă.

3. Совет саманинче *ĕненӳсемпе чарусене* пичетлемен те, тĕпчемен те, 80-мĕш çулсен варринче ушкăнлас ыйтăва хускатнă, анчах çак ĕçе туллин туса çитереймен.

4. Автор çак паремисен ушкăнлавне сĕнет, вĕсен пĕр йышне чăваш фольклористикинче пĕрремĕш хут *ĕненӳ-халап* тесе пайăрлать.

5. Ĕненӳсемпе чарусен пысăк пайĕ тĕрлĕ халăхăн пĕрешкел пулнине палăртмалла.

**Список Литературы**

Абукаева, Л.А. (2018). *Запреты в системе воззрений мари*. Йошкар-Ола: РИЦ Марий. ун-та, 204 с.

Антипина, Егоров (2018). *Чувашская мифология*. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 591 с.

Ашмарин, Н.И. (1928–1950). *Словарь чувашского языка. Чăваш сăмахĕсен кĕнеки*. Вып. I–XVII. Казань–Чебоксары.

Борисов, А.Г. (1972). *Устно-поэтическое творчество мордовского народа. Эрзянская свадебная поэзия*. Саранск: Мордов. кн. изд-во, 471 с.

Вишневский, В.П. (2004). «О религиозных поверьях у чуваш». *Письменная культура раннего просветительства.* Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2004, с. 177–192.

Ендеров, В.А. (2004). «О проблемах классификации чувашских паремий». *Ашмаринские чтения: материалы межрегиональной научной конференции*. Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, с. 245–254.

Золотницкий, Н.И. (2007). *Корневой чувашско-русский словарь. Избранные труды*. Чебоксары: изд-во Чуваш ун-та, с. 159–303.

Ильина, Г.Г. (2014). «О некоторых особенностях чувашских малых жанров». *Перспективы развития науки и образования. Сборник научных трудов по материалам Международной научно-практической конференции*. Часть 2. Тамбов: Изд-во ТРОО «Бизнес-Наука-Общество, с. 49–50.

Комиссаров, Г.И. (1989). «Чăваш фольклорĕпе литература вĕрентĕвĕ». *Чăваш халăх сăмахлахĕ. Тĕпчевсемпе текстсем*. Шупашкар: ЧЛИЭНТИ, 1989, с. 6–45.

Магницкий, В.К. (1881). Материалы к объяснению старой чувашской веры. Казань: Тип. Импер. ун-та, 268 с.

Магницкий, В.К. (1888). *Нравы и обычаи в Чебоксарском уезде. Этнографический сборник*. Казань: Тип. Губ. прав., 118 с.

Месарош, Д. (2000). *Памятники старинной чувашской веры*. Чебоксары: ЧГИГН, 360 с.

Михайлов, С.М. (1972). *Труды по этнографии и истории русского, чувашского и марийского народов*. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 423 с.

Никольский, Н.В. (1904). «Программа для собирания сведений о чувашах». *Известия по Казанской епархии*, 3, с. 63–72.

Никольский, Н.В. (1919). «Вопросник по народному творчеству». *Основы инородческого просвещения*, Казань, с. 30–50.

Никольский, Н.В. (1921). *Творчество чуваш*. Казань: ИОАИЭ, т. XXXI, вып. 1, с. 77–86.

Никольский, Н.В. (1958). «О пословицах чувашского народа». *Вопросы языка и литературы*. Ученые записки ЧНИИ, вып. XVIII, Чебоксары, с. 120–143.

Одюков, И.И. (1985). «Авалхи ĕненӳсем». *Ялав*, 9, с. 26–27.

Пермяков, В.Л. (1988). *Основы структурной паремиологии*. М.: Наука, 234 с.

Родионов, В.Г. (1982). «Вопросы жанровой классификации чувашского фольклора». *Чувашский фольклор. Специфика жанров*. Чебоксары: НИИЯЛИЭ, с. 150–170.

Родионов, В.Г., Ендеров В.А. (2004). *Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Лекцисен курсĕ*. Шупашкар: Чăваш ун-чĕн изд-ви, 294 с.

Родионов, В.Г. (2006). «Вопросы жанровой классификации чувашского фольклора». *Этнос. Культура. Слово*. Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, с. 3–53.

Сбоев, В.А. (1865). *Чуваши: их происхождение, язык, обряды, поверья, преданья и пр. Этнографическое исследование, посвященное чувашам*. М.: типография С. Орлова, 188 с.

Сидорова, Е.С. (1978). «Сăнавсемпе паллăсем, тĕшмĕшсем». *Чăваш литературоведенийĕн ыйтăвĕсем. Тĕпчев ĕçĕсем*. 82-мĕш каларăм. Шупашкар: Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи ЧЛИЭНТИ, 1978, с. 115–124.

Сидорова, Е.С. (1984). «Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем, сăнавсемпе паллăсем, тупмалли юмахсем». *Чăваш халăх сăмахлăхĕ. V том. Вак жанрсем.* Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, с. 5–21.

Смоленский, А.В. (1894). *Чувашские приметы о погоде и ее влиянии на хозяйство*. Казань: ИОАИЭ, т. 13, вып. 3, с. 147–221.

Тимофеев, Г.И. (1972). *Тăхăрьял*. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 431 с.

Федотова, Е.В. пухса хатĕрленĕ (2009). *Чăваш халăх пултарулăхĕ. Сăнавсемпе ĕненӳсем. Тĕлĕксем*. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 383 с.

Фукс, А. (1840). *Записки о чувашах и черемисах Казанской губернии*. Казань: Тип. Казан. Импер. ун-та, 329 с.

ХФУ ĂБ – Хусан федераци университечĕн Ăслăлăх библиотекин Сайра ал çырусемпе кĕнекесен пайĕ.

ЧПГĂИ ĂА – Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн Ăслăлăх архивĕ: I пай, 28 уп., 305 с.; 7 уп., 355 с.; 75 уп., 84 с.; 102 уп., 301 с., 306 с., 310 с.; 138 уп., 441 с.; 159 уп., 395–396 с.; 215 уп., 517 с.; 240 уп., 7 с.; 247 уп., 173 с.; 327 уп., 119 с.; 358 уп., 157 с.; 650 уп.; III п., 7 уп., 33 с.; 19 уп., 130 с.; 311 уп., 673 с.; 311 (3) уп., 874 с.; 311 (4) уп., 932 с.; 349 уп., 2 с.; 435 уп., 159 с.; 643 уп., 76 с.; 751 уп., 167 с., 168 с.; 2227 уп., 36 с., 292 с.; IV п., 11 уп., 306 с.

**Интернетран**

http://www.Ural-Tatar (Шырав кунĕ: 2020 ç. нарăсан 14-мĕшĕ).

http://www.kultur.gov.tr (Шырав кунĕ: 2020 ç. нарăсан 14-мĕшĕ).

https://www.km.ru/front-projects/russkie-prazdniki (Шырав кунĕ 2020 ç. нарăсăн 15-мĕшĕ).

